# Çемье ăшши парнелерĕç

## Çичĕ уйăхри Линăна Малти Ишекри пĕр мăшăр – Лариса Николаевăпа Аркадий Порфирьев – хăй хӳттине илчĕ



**МОРАЛЬ ТЕМИПЕ**

Калининăри участок больницин педиатрĕ И.Константинова, васкавлă медицина пулăшăвĕн фельдшерĕ А.Егорова, Ишлĕри фельдшерпа акушер пункчĕн фельдшерĕ Л.Григорьева Шуркасси Ишекре черетлĕ тĕрĕслевре пулнă. Çак ялта пурăнакан çула çитмен амăшĕ çичĕ уйăхри пепкине хӳтлĕхсĕр хăварнине тупса палăртнă. Сакăр вунна çывхаракан асламăшĕпе кун кунланă чĕчĕ ачи. Пепкене çийĕнчех Вăрнарти тĕп больницăн ача-пăча уйрăмне ăсатнă.

Пĕчĕк Лина больницăра икĕ эрнене яхăн пурăннă хыççăн ăна опекăна илекенсем тупăнчĕç. Малти Ишекре пурăнакан мăшăр – Лариса Анатольевна Николаевăпа Аркадий Борисович Порфирьев – иккĕмĕш ача пирки тахçанах ĕмĕтленнĕ. 11 çулти хĕрĕ Олеся та ашшĕпе амăшĕнчен хăçан йăмăк парнелетĕр тесе тăтăшах ыйтнă. Пĕчĕк Лина шăпи ырă чунлă, ăш пиллĕ Лариса Анатольевнăпа Аркадий Борисович чĕрине хытах ыраттарнă, вĕсем тӳрех район тĕп больницин ача-пăча уйрăмне çитнĕ. Хĕрачана курсанах мăшăр ăна хăйĕн хӳттине илме тĕв тунă. «Лина та пирĕнтен пачах та ютшăнмарĕ», – терĕ Лариса Анатольевна кăмăллăн. Кирлĕ документсене пухнă хыççăн çак эрнере Линăна мăшăр опекăна илчĕ. «Пирĕн чиперук», – теççĕ Лариса Анатольевнăпа Аркадий Борисович ачана юратса. Лина пĕчĕк пулин те пĕтĕмпех ăнланать тейĕн: хăйне çемье ăшши парнелекенсем çине пăхса йăл кулса илет.

**Е.ТИКИНЕВА.**